# «Нарспиана» – ҫӗнӗ ӑслай

***Ӗнер ЧР Наци библиотекинче Чӑваш патшалӑх гуманитари наукисен институчӗн ӗҫченӗн Илемпи Туркайӑн 2017 ҫулта тухнӑ «Нарспиана» кӗнекине пахаланӑ.***

«Нарспи» поэма пичетленнӗренпе кӑҫал 110 ҫул ҫитет. Аса илтеретпӗр: Константин Ивановӑн вилӗмсӗр хайлавӗ пӗрремӗш хут 1908 ҫулта Иван Яковлев пухса хатӗрленӗ «Чӑваш халапӗсем» кӗнекере кун ҫути курнӑ. Ҫак тапхӑрта чӑваш поэзийӗн ылтӑн ҫӳпҫине кӗнӗ произведение пирӗн республикӑра кӑна мар, чылай регионпа ҫӗршывра тӗрлӗ чӗлхепе кӑларнӑ.

Монографи авторӗ ҫак кӗнекесене ӳнерҫӗ куҫӗпе тишкерсе художниксем поэмӑна мӗнле ӳкерчӗксемпе илемлетнине тата вӗсен пахалӑхӗ епле аталанса пынине тӗпченӗ. Кӗнекене искусствоведени докторӗсем Михаил Кондратьев, Алексей Трофимов, Владимир Кудрявцев тата ыттисем пысӑк хак панӑ.

*Андрей МИХАЙЛОВ хатӗрленӗ.*